28-мĕш кун тухать. Ханĕ 20 пус.

1945
АВГУСТ
25
ШАМАТКУН
164(6915)№

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Колхозри ĕç дисциплини хурçă пек çирĕп пулмалла

Колхозсен уйăрăсенче халĕ чи паха та ответлă ĕçсен хĕрӳллĕ тапхăрĕ пырать. Партипе правительство тырпул пухăкĕртессине—пĕтĕм халăх ĕçĕ тесе хаклаççĕ. Тырпул пухса кĕртесси тата государствăна тырă парасси хуçалăхпа политикăллă чи пысăк задача пулса тăрать тесе асăрхаттараççĕ.

Республикăри нумай колхозсем тырпул пухса кĕртес ĕçе ялти пĕтĕм вăя мобилизацилерĕç. Вăрнар, Советски, Шăхасан, Красноармейски тата ытти хăшпĕр районсенчи колхозсем вырмалли пĕтĕм тырра суррине ытла пухса кĕртнĕ. Çак районсенчи нумай колхозсем тырă вырса пухас ĕçре питĕ паха тĕслăхсем кăтартаççĕ. Вăрнар районĕнчи Чапаев ячĕпе тăракан колхоз республикăра чи малтан, августăн 8-мĕшĕ тĕлне, ыраш вырса пĕтерчĕ, вăл халĕ тĕштырăсене пĕтĕмпех вырса пустарнă. Кунта ватти-вĕтти, кăнтăрла та çĕрле те, машинăпа та çурлапа та вырнă, çавапа та çулнă. Ĕçлеме пултаракан пĕр çын та ĕçсен пăрăнса юлман, кулленхи ĕç нормине тултарайманнисем пулман. Пур ĕçе те уйăрăм сдельщинăпа тата уйăрăм участокпа тунă. Утмăл çултан иртнĕ Хрусталева, Быков, Арбузова юлташсем çумăр çуса чăрмантарнă кунсенче те хăйсен куллехи нормине 2—3 хут иртерсе тултарнă. Вĕсем кăçал кашнисех 100—150 ĕçкунĕ тунă. Тырă вырнă вăхăтра Анаткас Хапăс ялĕнче, хуралçăсемсĕр тата ĕçлеме пултарайман çынсемсĕр пуçне, пĕр çын та ялта пулман. Чкаловски районри Кивĕ Туçари «Гвардеец» колхозри çамрăксем эрех хушши хиртеç таврăнмасăр çĕрле те кăнтăрла та ĕçлеçĕ. Тырпул пухса кĕртес ĕçре мĕнпур вăйăпа тулли усă курас тесе, кунта кунне виçĕ хутчен хиртех вĕри апат çитернĕ ача ясли организацилеççĕ. Çапла ĕçтă тырпул пухса кĕртес ĕçе пĕтĕм хăйăка явăстарни, колхозра ĕç дисциплинни хурçă пек çирĕп пулни ĕçĕн ăнăçлăхне татса парать.

Анчах та районсенчен килекен хыпарсем хăшпĕр колхозсенче ĕç дисциплини çирĕп марри çинчен, колхозри ĕçе пур колхозниксене те явăстарманни çинчен каласçĕ. Çĕмĕрле районнех пур. Çак район тырпул пухса кĕртес тĕлĕшпе кăçал та ытти районсенчен юлса пырать. Район юлса пынăн тĕп сăлтавĕ—нумай колхозсенче ĕç дисциплини чăтма çук начарри, тырпул пухса кĕртес ĕçе кирлĕ пек организацилеменнни пулать. Пĕр Мăн Улхаш ял Советĕнчи виçĕ колхозра кăна 200 çынна тырпул пухса кĕртес ĕçе явăстарман. Ĕçе тухакансем те кая юлса тухаççĕ тата ĕçрен ир таврăнаççĕ. Йĕпрес районĕнчи колхозсенче те ĕç дисциплини начар. Сталин ячĕпе тăракан колхозра иртнĕ çул 60 çын ытла ĕçкунĕн минимумне тултарман, анчах вĕсене нихăшне те ответ тыттарман. Кăçал та кунта ĕçе тухман тата ĕçкунĕсен минимумне тултарман колхозниксем нумай. Анчах та колхоз председателĕ Сергеев юлташ ĕçрен пăрăнакансене ответ тыттарас тĕлĕшпе çак вăхăта çитсе те нимĕн те туман-ха. Çакăн пек колхозсем Йĕпрес районĕнче пĕрре кăна мар. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи колхозсем нумайĕшĕ кăçал тырпул пухса кĕртес ĕçе хастарлăн тытăнчĕç. Анчах та çак районра ĕçе сӳрĕк туса пыракан колхозсем те пур-ха. «Чăваш Коммуни» колхозах илер. Колхозри хурçă пек çирĕп дисциплинăпăн, ялхуçалăх артелĕн уставне тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пырассишĕн тăрăшман пирки, кунта колхозниксен 68 процентĕ ĕçе питĕ сӳрĕк хутшăнаççĕ. Çак вăхăта çитсе те 10—15 ĕçкунĕ кăна тунă колхозниксем кунта нумай-ха.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ тырпул пухса кĕртес ĕçе мĕнпур колхозниксемпе совхозсенчи рабочисене хутшăнтарма, хуçалăхри шалти ĕçсенче тата подсобнăй хуçалăхсенче ĕçлекен колхозниксене çав ĕçсенчен май килнĕ таран ытларах пушатса, вĕсене тырă вырнă çĕре тата турттарнă çĕре хутшăнтарма хушаççĕ. Вăл кăна та мар, колхозсемпе совхозсен территорийĕнче пурăнакан ĕçлеме пултракан мĕнпур çынсене—колхозниксемпе вĕсен çемьисене, çавăн пекех тата колхозник мар ытти çынсене те, вĕсем промышленноçра е транспортра ĕçлемеççĕ пулсан, тырпул пухса кĕртнĕ çĕре обязательнăй йĕркепе явăçтармалла.

Çак постановление тырпул пухса кĕртес ĕçре пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пымалла. Ӳссе çитнĕ, ĕçлеме пултракан колхозниксем сăлтавсăрах тырпул пухса кĕртес ĕçрен пăрăнаççĕ пулсан, вĕсем çине, колхоз правленийĕ йышăннă тăрăх, ялхуçалăх артель уставĕн 17-мĕш статьинче кăтартнă пек, ĕçкунĕсемпе штраф хумалла тата аванс йĕркипе тырă тата ытти ялхуçалăх продукчĕсем памалла мар.

Тырпул пухса кĕртес ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартакан колхозниксене пур енчен те хавхалантарса пымалла. Çав вăхăтрах ĕçе тухман çынсене, наянсене пĕр хĕрхенмесĕр ответ тыттармалла. Тырпул пухса кĕртнĕ чухне ĕçри дисциплина хурçă пек çирĕп пулмалла, ăна никам та пăсма пултараймасть.

Кашни колхозрах пур ĕçе те тĕрĕс шута илмелле, кам хăш вăхăтра ĕçе тухнине, ĕçрен хăçан кĕнине асăрхаса тăмалла. Кашни колхозникăн, кашни колхозницăн хăйĕн кулленхи нормине ытлашшипех тултарассишĕн ăмăртса ĕçлемелле. Кулленех массăллă-политикăллă ĕçе анлăн туса пынипе пĕрлех, закон тăрăх пăхнă мĕнпур йĕркесене пурнăçласа, ĕç дисциплинине çирĕплетессишĕн пĕтĕм вăя хуçалла.

Тырпула вăхăтра пухса кĕртесси, государство уйăнчи обязательствăсене вăхăтра парса татасси—пĕтĕмпех колхозниксемпе колхозницăсем, ялта пурăнакан мĕнпур халăх уйăхир ĕçне хастарлăн хутшăннинчен килет.

Уйăхир ĕçне пур колхозниксене те каларассишĕн, кулленхи нормăна ирттерсе тултармалла тăвассишĕн кĕрешесси вырăнти парти, совет, комсомол организацийĕсен, колхоз руководителĕсемпе çĕрĕç ĕçе пысăк задачи пулса тăрать.

Республика уйăрăсенче пуян тырпул ӳссе çитнĕ. Пирĕн колхозсенче çак тырпула пухса кĕртес чи хĕрӳллĕ тапхăр пырать. Çак тапхăрти пысăк ĕçсене ăнăçлăн туса ирттернинчен пирĕн государствăн вăрçăна экономика хăвачĕ малалла ĕрекленсе пырать, пирĕн колхозниксен малашнехи пурнăçĕ лайăхланать. Пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем, мĕнпур ялхуçалăх работникĕсем, Кубань колхозникĕсен патриотла чĕнĕвне пĕтĕм чунĕчĕререн ырласа, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç тата хăйсем çине конкретнăй обязательствăсем илчĕç. Çав обязательствăсем пирĕн хăçатăн ĕнерхи номерĕнче пичетленсе тухнă. Çак обязательствăсене пурнăçласси питĕ чыслă, çав вăхăтрах тата ответлă ĕç пулса тăрать. Пирĕн халăх хăйĕн обязательстăвсене яланах чыслăн пурнăçлама вĕренниĕ. Иккĕленмелли те çук, çак обязательствăна та вăл чыслăн пурнăçлĕ. Колхозри ĕç дисциплинине хурçă пек çирĕплетсе, хамăр çине илнĕ обязательствăсене пурнăçлассишĕн, хамăрăн Таван çĕршыв вăйхăватне ӳстерессишĕн пĕтĕм вăя хурса кăнтăрла та, çĕрле те ывăнма пĕлмессĕр ĕçлемелле. Коммунистсемпе комсомолецсен, ялхуçалăх специалисчĕсемпе çĕрĕç органĕсенче ĕçлекенсен колхозниксен анлă массине тырпул пухса кĕртес тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес ĕçре çĕнĕрен пысăк ӳсĕмсем тума социализмлă ăмăртăва анлăрах сарса хавхалантарса пымалла.

Юратнă Таван çĕршыв умĕнче илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçа кĕртер!

Машинăсемпе усă курни ĕçе хăвăртлатать

ВĂРНАР, августăн 23-мĕшĕ. (Телефонпа, хамăр корр.). Анаткас Уравăшри Киров ячĕпе тăракан колхозра тырпул пухса кĕртес тата государствăна тырă парас ĕçсем хĕрӳллĕн пыраççĕ. Тырпул пухса кĕртес ĕçе кунта пĕлсе организацилепĕ. Кашни ĕçе уйăм сдельщинăпа тăваççĕ тата машинăсемпе туллин усă кураççĕ. Колхозра 4 бригада, кашни бригадăннах жнейка пур. Жнейкăсене тырпул вырма тухиччен нумай малтан тĕплĕн юсаса хатĕрленĕ, юсас ĕçе пулас машинистсем хăйсем те хутшăннă. Çавна пула тырă вырма тухнă малтанхи кунранах жнейкăсемпе туллин усă кураççĕ. Кашни жнейкăна норма тăрăх кунне 5 гектар вырмалла. Машинист Борис Емельянов яланах нормăна иртерсе тултарать. Вăл куллен 6—7 гектар вырать. Ытти машинистсем те хăйсен нормисене ытлашшипех тултараççĕ.

Çурлапа выракансем хăйсене уйăрса панă участоксенче пĕчченшерĕн е пĕчĕк ушкăнпа ĕçлеççĕ. Ĕç тухăçлăхĕ вара кашнийĕннех пысăк. Лиза Федорова кулленхи нормăна 170 процент, Таисия Городакина—160 процент, Галина Федорова —150 процент, 60 çултан иртнĕ Васса Попова—160 процент тултарса ĕçлеççĕ.

Колхозра халĕ кĕрхи тырăсене пĕтĕмпех машинăпа акаççĕ. Колхозра 4 сеялка, вĕсемпе туллин усă кураççĕ. Норма тăрăх кунне 5 гектар акмалла. Машинăпа акакан Анна Осипова кулленех 6 гектар, Терентий Кузьмин 7,5 гектар акаççĕ. Августăн 25-мĕшĕ тĕлне колхоз кĕрхи тырăсене акса пĕтерет.

Е. ВОЛКОВ.

МТС МАШИНИСЕМПЕ: ТУЛЛИН УСĂ КУРМАЛЛА

Шупашкар МТС-ĕн 7 комбайн, 10 молотилка, 14 тырă вырмалли машина, 16 сеялка пур. Анчах та çак машинăсемпе çителĕкĕр усă кураççĕ. Комбайнсемпе пурĕ 700 гектар ытла вырмалла, августăн 23-мĕшĕ тĕлне вара пурĕ те 75 гектар кăна вырнă. Молотилкăсемпе пачах усă курмаççĕ. Районра ыраш акас ĕç хĕрсе пырать пулсан та, кунта 16 сеялкăна та 120 гектар кăна акнă.

Уйăрăм колхоз председателĕсем комбайперсене ĕçлеме памаççĕ. «Трактор» колхозра (председателĕ Родионов), «Стрела» колхозра (председателĕ Тимофеев), «Новая деревня» колхозра (председателĕ Иванов) комбайнсемпе молотилкăсем патĕнче ĕçлеме çын паманнине пула комбайнсем ĕçлемесĕр лараççĕ.

Колхозра ĕçлеççĕ

СĔНТĔРВĂРРИ, августăн 23-мĕшĕ. (Телефонпа). Хулари вăтам шкулта вĕренекен комсомолецсемпе пионерсем сыăхри колхозсене тырпул пухса кĕме хастарлăн пулăшаççĕ. Августăн 17-мĕшĕнче Новинскри Сталин ячĕпе тăракан колхоза 40 вĕренекен кайрĕç. Вĕсем унта тырă вырааççĕ, машинăпа вырнине сыхаççĕ, кĕçĕнтерех классенче вĕренекенсем пучах пуçтараççĕ. Çав вăхăтрах шкул ачисем колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче агитацине массăллă ĕçе те лайăх туса пыраççĕ. Çĕнĕ хаçатсем пысранах звеносенче вуласа параççĕ, калаçусем ирттереççĕ. Колхозниксем канма ларнă вăхăтра тĕрлĕ юрăсем юрласа параççĕ.

Хаваслă ĕçленипе ĕç те ăнăçлă пырать. Нумай колхозниксем куллехи ĕç нормисене ытлашшипех тултараççĕ.

Я. АЛЕКСАНДРОВ.
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

РЕСПУБЛИКĂРИ МТС-сем АВГУСТĂН 20-мĕшĕ ТĔЛНЕ ХĂЙСЕН ПЛАНĔСЕНЕ МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(процентпа)

МТС-сем	Плана тултарнă (аванс çапнисĕр пуçне)
Вăрнар	127,1
Шăхасан	105,7
Йĕпрес	105,2
Елчĕк	101,5
Куславкка	101,0
Ишлей	93,3
Канаш	90,8
Чкаловски	90,7
Вăрмар	90,1
Красноармейски	89,8
Çĕрпӳ	88,1
Калинино	80,9
Комсомольски	80,4
Первомайски	75,2
Сĕнтĕр	69,3
Шупашкар	69,1
Тăвай	68,4
Улатăр	67,1
Элĕк	66,3
Çĕмĕрле	64,6
Етĕрне	64,5
Хĕрлĕ Чутай	63,8
Сивăва	62,6
Сурмайдан	61,8
Сĕнтĕрвăрри	61,7
Октябрьски	55,0
Шăмăршă	50,9
Кувакино	47,3
Пăрачкав	40,6

„Пионер" колхозра ĕçе йĕркеленĕ

ÇĔРПӲ, августăн 23-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри 79 колхозран 60 колхоз кĕрхи тырăсене пĕтĕмпех вырса пĕтерчĕç, «Хĕрлĕ Тивĕн» тата «Ĕмĕт» колхозсен членĕсем паян-ыранах çурхи тырăсене вырса тата кĕрхи тырăсене акса пĕтереççĕ.

«Пионер» колхоз вара тĕштырăсене çурринех те вырман. Çакă вăл пĕтĕмпех ĕçе йĕркелеме пĕлменнинчен килет. Колхозниксем уйăрăм участоксем çинче ĕçлеççĕ пулин те, нормăна тултараймаççĕ. Мĕншĕн тесен вĕсем ĕçе кая юлса тухаççĕ, ĕçрен часах таврăнаççĕ. Хăшпĕр колхозниксем уя анат симе кăна тухаççĕ. Колхозра ача ясли организацилемен. Çавна пула ачалă колхозницăсем паха вăхăта нумай чухне усăсăр ирттереççĕ. Тырра çавасемпе çулмаççĕ. Тырă выракансем хушшинче нимĕнле агитацилĕ-массăллă ĕç те туса пымаççĕ. Колхоз председателĕ Федоров ĕçе кирлĕ пек йĕркелессишĕн сахал тăрăшать.

Тырă вырас ĕç «Этна», «Комбайн» тата ытти хăшпĕр колхозсенче те сӳрĕк пырать.

З. СЕМЕНОВ.

Государствăна тырă пĕр килограмм та паман

КӲКЕÇ, августăн 23-мĕшĕ. (Телефонпа). Чăкăр ял Советĕнчи колхозсем государствăна тырă парас енĕпе лайăх ĕçлеççĕ. «Чигирь», «Зерно», «Трудовик», «Чăваш Коммуни» колхозсем пилĕк кун хушшинче государствăна тырă леçмелли графика ирттерсе пурнăçласçĕ. Кунта тырă чĕрĕ тесе тăмаççĕ, ăна авăнсенче тата кăмакасенче типĕтеççĕ. Тырă чĕрĕ тесе каялла илсе килни пулман.

Карачура ял Советне кĕрекен колхозсем вара çак вăхăта çитсе те государствăна пĕр килограмм та тырă леçмен. Шупашкар хули сывăхĕнчи Заводская, Соляново, Сĕньял ял Совечĕсенчи колхозсенче те государствăна тырă парас ĕç сителĕкĕр пырать. Кунта: тырă чĕрĕ, «Заготзернора» илмеççĕ, тырра ниçта та типĕтме çук, хĕвеллĕ кунсем пулĕç-ха, тесе лараççĕ. Колхозсенче авăнсем çук, тырра кăмакасенче типĕтессинне те организацилемен.

Г. ПЕТРОВ.

Нормăран ирттерсе выраççĕ

Ишлей районĕнчи Мамăш ял Советне кĕрекен колхозсенче тырă вырнă çĕрте уйăрăм сдельщинăпа пĕчченшерĕн е пĕчĕк ушкăнпа уйăрăм участоксенче ĕçлеççĕ, çавăнпа та ĕç тухăçлăхĕ пысăк.

«Коммунист» колхозра çурлапа тырă выракансем Е. Игнатьева, А. Белова, В. Смирнова, Е. Михайлова, С. Рыкова юлташсем кашнисех куллехи нормăна 180—210 процент тултараççĕ.

Партин 17-мĕш съезчĕ ячĕпе тăракан колхозра А. Смирнова, А. Гаврилова, М. Павлова колхозницăсем куллехи нормăна çурлапа вырса 150-шар процент тултараççĕ.

Н. НИКИФОРОВ,
М. АЛЕКСЕЕВА.

Чăваш АССР Прокуратуринче

Тырпул пухса кĕртмелли тата государствăна обязательство тăрăх тырă памалли графика пăснăшăн, тырпул пухса кĕртнĕ чухне тырра тăккаланăшăн тата тырпул пухса кĕртес ĕç çинчен сводкăсем суйса панăшăн Ишлей районĕнчи «Активист» колхоз председательне Г. П. Иванова тата çак колхозăн бригадирне М. П. Ермакова судпа парса штăмламалла тунă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АВГУСТĂН 24-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 24-мĕшĕнче Инçетри Хĕвелт ухăçĕнче пирĕн çарсем кăтартса панă енсенелле малалла иуçса пынă.

БАЙКАЛ ЛЕШ ЕНЧИ ФРОНТ çарĕсем Маньчжурин кăнтăр пайĕнче ИБОШОВ хулине йышăнса илнĕ.

ИНÇЕТ-ХĔВЕЛТУХĂÇĔНЧИ 1-мĕш ФРОНТ çарĕсем, Карейăн хĕвелтухăçĕнчи çыранĕ тăрăх малалла иуçса пырса, КИССЮ хулипе чугун çул узелне йышăнса илнĕ. Фронтăн авиадесант ушкăнĕсем десантпа анса Корейăри ХЕЙДЗИО, КАНКО хулисене йышăнса илнĕ.

ИНÇЕТ-ХĔВЕЛТУХĂÇĔНЧИ 2-мĕш ФРОНТ çарĕсем САХАЛИН утравĕн кăнтăр пайĕнче ХОНТО хулипе портне тата МАНУИ хулине йышăнса илнĕ.

МУКДЕН районĕнче пирĕн çарсем пирĕнпе союзлă государствăсен çар çыннийĕсене тытса усрамалли лагере тупнă. Ку лагерьте японецсем хупса усранă пирĕн союзниксен 1.670 салтакĕпе офицерне тата 28 генералне ирĕке кăларнă.

Августăн 23-мĕшĕнче пирĕн çарсем Япони салтакĕсемпе офицерĕсене 14.000 çын ытла тытканă илнĕ.

Япони çарĕн парăнакан чăсĕсемпе соединенийĕсене йышăнас ĕç малалла пырать.

СОВИНФОРМБЮРО

Японин 5-мĕш армийĕн командующийĕ Симидзу Норицуне генерал-лейтенант çапла каласа панă

Японин 5-мĕш армийĕн тытканă парăннă командующийĕ Симидзу Норицуне генерал-лейтенант çапла каласа панă:

«5-мĕш армипе Харбин еннелле каймалли тĕп çула хӳтĕлесе тăнă. Августăн 8-мĕшĕнче вăрçă ĕçĕсем пуçланиччен çав армире 65.000 çын пулнă. Вырăс çарĕ çӳреме йывăр пулса тăракан тайга районĕсем урлă каясси çинчен эпир шухăшламан та. Вырăссем çавăн пек çиçĕмле хăвăрт наступлени тăвассине эпир кĕтмен. Линькоупа Мулин хушшинче тата унтан Муданьцзян еннелле каякан оборона тăрăхне арми туса пĕтереймерĕ. Пирĕн армире 40.000 çын ытла пĕтрĕ. Муданьцзян хулине хамăр алăра тытса тăма май пулмарĕ. Арми вырăссене малалла хирĕç тăма пултараймарĕ».

Çĕнтерӳ салютĕ

Ĕнер пирĕн Тăван çĕршывăн столици Мускав, 324 тупăпа 24 хут пĕр хирăс персе, Байкал леш енчи тата Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи паттăр çарсене, Лăпкă океан çинчи флота, çавăн пекех тата Монголи Халăх Республикин Чойбалсан маршал ертсе пыракан çарне хамăр Тăван çĕршыв ячĕпе салют пачĕ. Август уйăхĕнчи каç темиçе тĕслĕ ракета суттипе суталса кайрĕ, çĕнтерӳ залпĕсем янăраса кайрĕç. Вĕсем Маньчжурие, Кăнтăр Сахалина тата Курильски утравсем пĕр пайне пирĕн чаплă çарсем йышăнни çинчен пĕлтерчĕç. Японецсен Квантунри çарĕ хирĕç тăма пăрахнă, хăйĕн хĕçпăшалĕсене пăрахса, пирĕн çарсене тытканă парăннă. Хĕрлĕ Çар Инçетри Хĕвелтухăçĕнче мĕнле çапăннине пĕтĕм çĕршыв тимлĕн сăнаса тăчĕ. Çав çапăçусем мĕнпе вĕçленессине вăл пĕлсе кĕтсе тăнă. Аслă çулпуç тата полководец—Совет Союзĕн Генералиссимусĕ Сталин ăслăн ертсе пынипе, пирĕн паттăр çар маньчжурин çĕрĕ çинчен тата Сахалин сурутравĕн кăнтăр пайĕнчен пĕтĕмĕшпех тасатнă. Вырăссен палăр тинĕс порчĕ Порт-Артур каллех пирĕн алăра, Çак чаплă çĕнтерӳсем пире татах та пултаруллăн ĕçлеме хавхалантараççĕ.

Сталин юлташăн çĕнтерӳ приказĕпе хавхаланса, фабрика коллективĕ планран иртерсе куллен 1500 мăшăр чăлха туса кăларма обязательство илнĕ.

Фабрика халиччен хăйĕн продукцине пĕвмесĕр кăларнă пулсан, халĕ туса кăларакан продукцин 35 процентне пĕвме тытăннă.

Фабрикăри рабочисем хастарлăн ĕçлеççĕ. Чи лайăх стахановкăсем Арзачева, Кузьмина, Янкина тата ытти те хăйсен куллехи нормисене ирттерсе тултараççĕ. Мастер Пераспольский юлташăн рационализаторла паха ĕçĕсене республика тулашĕнче те пĕлеççĕ. Ăна Çăмăл промышленность Наркомачĕ нумаях пулмасть чи лайăх рационализаторсен шутне кĕртсе 800 тенкĕ преми пачĕ.

Сталин юлташăн приказĕпе хавхаланса

Ĕнер республикăри ĕççыннисемпе служащисем Хĕрлĕ Çар Инçет-Хĕвелтухăçĕнче Япони самурайĕсене хирĕç паттăрлăн наступлени туса пыни çинчен Сталин юлташăн приказне радио тăрăх пысăк хавасланăпа итлерĕç.

Шупашкарти чăлха фабрикин 1-мĕшпе 2-мĕш участоксенчи цехсенче пухусем пулса иртнĕ. Пухусене коммунист-агитаторсем старши мастер Гринь тата мастер помощникĕ Кваскова юлташсем иртернĕ.

— Пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар,—тенĕ пухура старши мастер Гринь, — Япони империалисчĕсен вăйлăн тĕреклетнĕ районĕсене çапса аркатса, хăйĕн паттăр вăйпе пĕтĕм тĕнчене татах тепĕр хут кăтартса пачĕ. Япони самурайĕсене Хĕрлĕ Çар Маньчжури çĕрĕ çинчен тата Сахалин сурутравĕн кăнтăр пайĕнчен пĕтĕмĕшпех тасатнă. Вырăссен палăр тинĕс порчĕ Порт-Артур каллех пирĕн алăра, Çак чаплă çĕнтерӳсем пире татах та пултаруллăн ĕçлеме хавхалантараççĕ.

Сталин юлташăн çĕнтерӳ приказĕпе хавхаланса, фабрика коллективĕ планран иртерсе куллен 1500 мăшăр чăлха туса кăларма обязательство илнĕ.

Фабрика халиччен хăйĕн продукцине пĕвмесĕр кăларнă пулсан, халĕ туса кăларакан продукцин 35 процентне пĕвме тытăннă.

Фабрикăри рабочисем хастарлăн ĕçлеççĕ. Чи лайăх стахановкăсем Арзачева, Кузьмина, Янкина тата ытти те хăйсен куллехи нормисене ирттерсе тултараççĕ. Мастер Пераспольский юлташăн рационализаторла паха ĕçĕсене республика тулашĕнче те пĕлеççĕ. Ăна Çăмăл промышленность Наркомачĕ нумаях пулмасть чи лайăх рационализаторсен шутне кĕртсе 800 тенкĕ преми пачĕ.

ВЛКСМ Центральный Комитетĕнче

ВЛКСМ Центральный Комитечĕ комсомол организацийĕсене ялти çамрăксен каçхи шкулĕсене çĕнĕ вĕренӳ сулне хатĕрлес ĕçе хутшăнтарас ыйтăва пăхса тухнă.

Çак шкулсен 1944—45 вĕренӳ сулĕнчи опычĕ çакна кăтартса пачĕ: ялти çамрăксем хăйсен производствопе ĕçне пăрахмасăрах малалла вĕренме тăрăшаççĕ. Алтай крайĕнче асăрах классене 3.458 çынна, Горький облаçĕнче—2.116 çынна куçарнă.

Çакăнпа пĕрлех ВЛКСМ Центральный Комитечĕ каçхи шкулсен пысăк çитменлĕхĕсене те палăртнă. Ун пек шкулсем Ярославль, Орел, Чита, Великие Луки, Тамбов, Кострома, Молотов, Архангельск облаçĕсенче начар ĕçленĕ. Çак облаçсенчи комсомол организацийĕсем каçхи шкулсем çинчен тивĕçлипе тăрăшман.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕ комсомол райкомĕсене, обкомĕсене, крайкомĕсене, союзлă республикăсен Центральный Комитечĕсене ялти çамрăксен каçхи шкулĕсене вĕренӳ сулпе хатĕрлес ĕçе активлăн хутшăнма хушнă.

Октябрь уйăхĕн малтанхи çур пайĕнче ялти çамрăксен каçхи шкулĕсем çĕнĕ вĕренӳ сулне мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслесе пăхмалла. (ТАСС).

Совет профсоюзĕсен делегацийĕ Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчен Мускава таврăннă

Совет профсоюзĕсен ВЦСПС председателĕ В. В. Кузнецов юлташ ертсе пыракан делегацийĕ, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи производствăллă профсоюзсен конгресĕ чĕннипе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче пулнă хыççăн, августăн 21-мĕшĕнче Мускава кайлла таврăннă.

XVII-МĔШ ĔМĔРТИ УКÇАСЕНЕ ТУПНА

Ярославльти краеведени музейĕ XVII-мĕш ĕмĕртри укçасен пухăнне илнĕ. Кунта 3500 штук пĕчĕк укçа шутланать. Вĕсене кĕмĕл пралукран çапса хатĕрленĕ. Тĕпчесе пĕлнĕ тăрăх, вĕсенчен чи авалхи укçа Иван Грозный ывăлĕ Федор Иванович патшăра ларнă вăхăтри укçа пулать. Борис Годунов тата Василий Шуйский сăнĕсене ӳкернĕ укçасем те пур.

Наука работникĕсем шутланă тăрăх, ку укçасене XVII-мĕш ĕмĕрĕн 40-мĕш çулĕсенче Алексей Михайлович патшăра ларнă чухне пытарнă пулнă. (ТАСС).

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

РЕСПУБЛИКĂРИ ПРОМЫСЛА КООПЕРАЦИ АРТЕЛĔСЕН СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТĂВĔН ИЮЛЬ УЙĂХĔНЧИ ИТОГĔСЕМ ÇИНЧЕН

Чăваш АССР Совнаркомĕ, республикăри промысла кооперацин артелĕсен социализмлă ăмăртăвĕн июль уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, çаксем мала тухнине палăртнă:

Шупашкарти «Пекарь» артель (правлени председателĕ Петров юлташ, хула Совет исполкомĕн председателĕ Аникин юлташ) мĕнпур продукци туса кăлармалли плана 198,7 процент, куллен кирлĕ таварсем туса кăлармалли плана 211,6 процент тултарнă. Чăваш АССР Совнаркомĕн кусса сӳрекен Хĕрлĕ Ялавне Шупашкарти Куйбышев ячĕпе тăракан артельрен илсе, «Пекарь» артеле нама тата ăна 8.000 тенкĕ парса премлеме йышăннă.

Муркаш районĕнчи Вăрманкасри «Молот» артель (правлени председателĕ Федотов юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Федоров юлташ) мĕнпур продукци туса кăлармалли плана 130,8 процент тултарнă. «Мотор» артеле 3.000 тенкĕ преми памалла тунă.

Шупашкар районĕнчи Сĕньял Уйăкасри «Араслан» артель (правлени председателĕ Нестеров юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Миронов юлташ) мĕнпур продукци туса кăлармалли плана 173 процент тултарнă. «Араслан» артеле 3 пин тенкĕ преми пама палăртнă.

Иртнĕ уйăхра Куславкка районĕнчи Карачри Клара Цеткин ячĕпе тăракан артель. Канашри «Швейник», Сталин ячĕпе тăркан артельсем, Сĕнтĕр районĕнчи Маттикассинчи «Кожевник» артель палăртнă.

УССР Верховный Совечĕн Президиумĕ Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕн уставне çирĕплетнĕ

1945-мĕш çулхи августăн 22-мĕшĕнче УССР Верховный Совечĕн Президиумĕ Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕн 1945-мĕш çулхи июнĕн 26-мĕшĕнче Сан-Франциско хулинче ăлă пуснă уставне çирĕплетнĕ. (ТАСС).

КУЛЛЕН КИРЛĔ ТАВАРСЕМ ТУСА КĂЛАРАС ТĔЛĔШПЕ ТИМЛĔНРЕХ ĔÇЛЕР

Ĕçсыниксен пурнăçне лайăхлатасси, вĕсен культурăпа йăлари нушисене тивĕçтересси—кирлĕ вăхăтри пысăк задачăсенчен нĕри пулса тăрать.

Германи империализмне хирĕç пынă вăрçăра Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕне никама пăтăнманлăхне сыласа хăварас тесе, совет халăхĕ пур тĕрлĕ йывăрлăхсене те тӳссе ирттерчĕ. Халĕ, вăрçă пирĕн çĕнтерӳпе вĕçленнĕ хыççăн, ĕçсыннисем валли куллен кирлĕ таварсем туса кăларасси партине совет органĕсен кулленхи ĕçĕ пулса тăчĕ.

Союзăлă промышленность предприятийĕсем сумĕнче куллен кирлĕ таварсем туса кăларакан цехсене тепĕр хут уçасси çинчен СССР Совнаркомĕ çак çулхи июнĕн 21-мĕнче постановлени йышăнчĕ. Вырăнти тата коопераци промышленноçĕсен предприятийĕсем вара халĕ, фронт заказĕсене пурнăçлама пăрахнă хыççăн, куллен кирлĕ таварсемпе апат-çимĕç продукчĕсене вырăнти чĕртавартан ытларах туса кăларма тытăнмалла.

Çапла вара, пурнăçра тăтăшах кирлĕ таварсемпе апат-çимĕç продукчĕсене нумайрах туса кăларма тытăнасси, куллен усă куракан япаласене ытларах юсамалла тăвасси тата çак ĕçсен пахалăхне лайăхлатасси — халăх хуçалăхĕн кальхи вăхăтри питех те кирлĕ задачи пулса тăрать.

Аслă Çĕнтерӳ ячĕпе пыракан Пĕтĕм Союзри социализмăлă ăмăртăва хутшăнса, Москворецкри пир-авăр фабрикинчи тата йывăç каскалакан заводри работниксем Совет Союзĕнчи вырăнти промышленноçăн мĕнпур работникĕсене куллен кирлĕ таварсем туса кăларассине ӳстерме чĕнсе каларĕç.

Пирĕн республикăри вырăнти промышленноçпа промысла кооперацийĕн чылай коллективĕсем çав чĕнӳе йышăнчĕç, халĕ хăйсен обязательствисене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешеççĕ. Куславккари, Сĕнтĕрвăрринчи, Етĕрнери промкомбинатсем, Карăмăлхăнчи «Труд», Канашри «Авангард», Вăрмарти Осипенко ячĕпе тăракан, Янăмри «Дружба», Етĕрнери Сталин ячĕпе тăракан тата ытти артельсем те çак çулăн иртнĕ 7 уйăхĕнчи плана ăнăçлăн тултарчĕç, продукци туса кăларассине, иртнĕ çулхине тăлăштарсан, чылай ӳстерчĕç. Канаш хулинчи, Етĕрне тата Улатăр районĕсенчи апат-çимĕç комбиначĕсем çулталăкри плана пĕтĕм продукци енĕпе тултарчĕç.

Чăваш АССР Апат-çимĕç Халăх Комиссариачĕ, областпе районри промышленноçа пĕрле илсен, çур çулти плана 22 процент чухлĕ иртерсе пурнăçланă. Вăрмар, Шăхасан, Куславкка, Сĕнтĕр районĕсенчи предприятисемпе артельсем, пĕтĕмпе илсен, начар мар ĕçлерĕç. Вĕсем иртнĕ çур çулта мĕнпур продукци туса кăлармалли плана 94,5 процент чухлĕ çеç тултарчĕç. Промысла кооперацийĕпе инвалидсен кооперацийĕн артелĕсем вара иртнĕ 6 уйăхра продукци туса кăлармалли плана 86,7 процент кăна тултарчĕç. Районри промышленность мĕнпур продукци туса кăларассине, 1944 çулăн малтанхи çур çулĕпе танлаштарсан, 13 процент чухлĕ ӳстерчĕ пулсан, коопераци промышленноçĕ вара иртнĕ çулхи шая 4,4 процент чухлĕ ситрейнерĕ. Республикăри район тата коопераци промышленноçĕн 238 предприятийĕпе артелĕнчен 97-шĕ кăна çак çулăн малтанхи çур çулĕнчи плана тултарчĕç. Çапла мĕнпур предприятисемпе артельсен виççĕмĕш пайĕ кăна плана тултарчĕ, виççĕ пайран тепĕр икĕ пайĕ вара—тултараймарĕ. Унсăр пуçне, предприятисемпе артельсен тăвата пайĕнчен пĕр пайĕ çулталăкри плана 50 процентран кая пурнăçларĕ.

Пирĕн район промышленноçĕнĕ промысла кооперацийĕ мĕншĕн çавăн пек начар ĕçлет-ха?

Вĕсем çапла начар ĕçлени, чи малтанах, чылай районсен руководителĕсем хăйсен предприятийĕсемпе артелĕсен ĕçĕсемпе интересленменнинчен, вĕсен ĕçне иккĕмĕш черетри ĕç вырăнне хунинчен, вĕсен ĕçне тĕрĕслесе тата пулăшу парса тăманнинчен килет. Çак çулăн пуçламăшĕнче, вырăна тухса тĕрĕслесе, Сĕнтĕр районĕнчи предприятисемпе артельсем начар ĕçленине палăртăнчĕ. Ун чухне райсовет исполкомĕн председателĕ Свешниковăн юлташăн районри предприятисемпе артельсен ĕçĕпе хăй сахал интересленнине йышăнма тиврĕ. Çакăн хыççăн Сĕнтĕр райсовет исполкомĕ хăйĕн йăнăшне тӳрлетрĕ, пĕрремĕш çур çулти плана районри тата коопераци промышленноçĕ енĕпе те иртерсе тултарчĕ.

Райсовет исполкомĕсен председателĕсем хăйсен предприятийĕсемпе артелĕсен ĕçне куллен ертсе пынă пулсан, ытти районсен те лайăх результатсем пулнă пулĕччĕç. Анчах та Элĕк, Советски, Хĕрлĕ Чутай, Шăмăршă тата Чкаловски районсенче куллен кирлĕ таварсем туса кăларас тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ. Çак районсенчи предприятисемпе артельсенчен пĕри те çур çулти плана тултарман. Унсăр пуçне вĕсем тавар туса кăларассине иртнĕ çулхи пĕрремĕш çур çултинчен те чакарнă. Ку районсем ытла та начар ĕçлени кашни çын пуçне вăтамран мĕн чухлĕ тавар туса кăларнине илсе пăхсан лайăх курăнать. Иртнĕ çур çулта районпа коопераци промышленноçĕ республикăри кашни çын пуçне вăтамран 91 тенкĕ те 46 пуслăх (курттăм сутнă хакпа шутласан) тавар туса кăларнă, анчах Советски районра 10 тенкĕ те 50 пуслăх, Хĕрлĕ Чутай районĕнче 11 тенкĕ те 80 пуслăх, Чурачăк районĕнче 11 тенкĕлĕх, Чкаловски районра 18 тенкĕ те 70 пуслăх, Элĕк районĕнче 37 тенкĕ те 70 пуслăх, Шăмăршă районĕнче 40 тенкĕлĕх, Улатăр районĕнче 18 тенкĕ те 70 пуслăх кăна туса кăларнă.

Çакăн хыççăн Элĕк, Советски, Хĕрлĕ Чутай тата ытти районсен руководителĕсем хăйсен районĕсенчи колхозсемпе ĕçсыннисене кирлĕ таварсем—çуна-урапа, кӳлмелли япаласем, катка-пичке, сĕтел-пукан туса кăларассишĕн, атă-пушмак, кĕпе-тумтир юсассишĕн тата çĕнĕрен тăвассишĕн кăшт та пулин тăрăшаççĕ тесе калама пулать-и ĕнтĕ? Çав районсен руководителĕсем урăх çĕрте тунă таварсемпе пурăнма вĕреннĕ те ку тĕлĕппе хăйсен ĕçлемеççĕ, урăх çĕртен кӳрсе килессе кĕтсе лараççĕ. Çапла туни вăл—питех те сиенлĕ ĕç. Ăна СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ ĕççыннисем валли куллен кирлĕ таварсемпе апат-çимĕçе вырăнти чĕртавартан туса кăларассине ӳстермелли мероприятисем çинчен 1941 çулхи январĕн 7-мĕшĕнче йышăннă постановленирех хытă сивленĕ.

Шăмăршă райсовет исполком председателĕн районри предприятисемпе артельсен планĕсене тултарас тĕлĕппе хăй нимĕн те туманнине Чăваш АССР Совнаркомĕнче фактсем илсе кăтартнă хыççăн йышăнма тиврĕ. Ку таранччен вăл пĕрмаях наркоматсемне союзсем япăх ĕçлени çине йăвантарса пурăначчĕ.

Ку çитменлĕх Шăмăршă, Советски тата Элĕк райсовет исполкомĕсен ĕçĕсене илсе пăхсан лайăх курăнать. Шăмăршă районĕнчи промкомбинат хăйне юсаса яриччен ех. вăрçă çулĕсенче, çулсерен 15—20-шер пин кубометр хăма çурнă. Çурнă материалсене хамăр республикăри çывăхри районсене кăна мар, тата Тутар республикипе Ульяновск облаçне те парса тăнă. Промкомбинат хăйĕн ĕçне юлашки вăхăтра чăтма çук начарлатрĕ. Иртнĕ çур çулта вăл пĕтĕмпе те 800 кубометра яхăн кăна хăма çурнă. Çапла вара, комбинат колхозсемпе ĕççыннисем валли йывăçран çурса хатĕрленĕ материалсем паманпа пĕрех. Комбинатăн йывăç касмалли вырăн хăйĕнчен 2 километрта кăна, унта хатĕрленĕ 2 пин кубометр йывăса халиччен те турттарса кăларман-ха. Райсовет исполкомĕ комбинат ĕçне тĕрĕслесе тăманнинне кура комбинатри работниксем, «хăйсен» йывăçне çурса, çав материалсене усламлă хакпа сутма тытăннă.

Нумаях та пулмасть çакă палла пулчĕ: Элĕк районĕнчи промкомбинат юлашки 4 çул хушшинче çулталăкри отчетсене çырса пыман тата çав отчетсене ниçта та яман, çав вăхăтра комбинат ĕçне никам та ревизи туман. Çапла вара, Элĕк районĕнчи промкомбината 4 çул хушши унăн управляющийĕ Каменев «тара илсе» тытса тăнă пек курăнать. Çак сăлтавсене пула комбинатăн нимĕнле механизаци те çуккинчен, вăл уйăхра 12—15-шер пин тенкĕлĕх продукци туса кăларнинчен тата плана пĕрмаях тултармасăр ĕçленинчен тĕлĕнмелли çук ĕнтĕ.

Ирĕксĕрех çапла ыйтас килет: районри руководительсем хăйсен предприятийĕсемпе артельсен ĕçне ертсе пыни мĕнре курăнать-ха вара? Элĕк районĕнчи промкомбинат Госбанкăн районри отделенийĕнчен мĕнле майпа укçа илсе тăма пултарнă-ха, районри финанс пайĕ промкомбинатăн тупăшĕсене мĕнле шута илсе пынă-ха тата унран налогсем мĕнле шыраса илнĕ-ха?

Советски районра 4 пĕчĕк предприятипе артель пур. Вĕсем иртнĕ çулта та, кăçал та уйăхран уйăха плана тултарса пымаççĕ, кăçал малтанхи çур çулта районри кашни çын пуçне 10 тенкĕ те 50 пуслăх товар туса кăларнă. Районри промкомбинатра темиçе уйăх ĕнтĕ управляющи çук, рабочисене 7 уйăх хушши ĕç укçи тӳлемен. Анчах çак йĕркесĕрлĕхсем районри руководительсене нимĕн чухлĕ те пăшăрхантармаççĕ.

Район руководителĕсем вырăнти промышленность ыйтăвĕсемпе çакăн пек интересленмении вĕсен ĕçне пĕтĕмпех япăхтарса ярать. Предприяти директорĕсемпе артель председателĕсем ĕçри ответлăха туйми пулаççĕ, совет законĕсеммне кооперади демократине пăсаççĕ, хуçасăрлăхпа юхăнчăклăх пуçланса каять, предприятисенчи рабочисемпе артельсен членĕсен ĕçлес кăмăлĕ чакать. Çак çулхи малтанхи 6 уйăхра промысла кобперади системинчи 22 артельре кăна ревизи тунă. Çав артельсенче растрата тунисемпе пурлăха вăрланисене 239 пин тенкĕлĕх палăртнă.

Предприятисенчи рабочисемпе артельсенчи алăстаççем хушшинче политикăллă ăнлантару ĕçне тата ĕçлекенсене вĕрентсе ӳстерес ĕçе начар йĕркеленĕ. Районсенчи общественнăллă пурнăçра предприятисемпе артельсенчи работниксем пурри палăрманпа пĕрех. Районри хаçатсем вырăнти тата кооперади промышленность ыйтăвĕсем çинчен сахал сыраççĕ.

А. МАТВЕЕВ

Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ

Чăваш АССР Совнаркомĕ пĕр çул калăлла райсовет исполкомĕсене пысăк ялсенче районри промкомбинатсене пăхăнса тăракан ялти промкомбинатсене организацилеме хушрĕ. Анчах халăхи вăхăтра ялсенче кăтартуллă ĕçлекен промкомбинат çук-ха. Советски, Элĕк, Хĕрлĕ Чутай тата ытти районсенче те ялсенче промкомбинатсем тăвас тĕлĕшпе пачах та ĕçлемен, Тăвай, Шăхасан, Çĕмĕрле, Çĕрнӳ районĕсенче ялсенчи промкомбинатсене ячĕшĕн кăна уçнă.

Ĕçри опыт çакна кăтартса парать: ялти промкомбинатсем вырăнти промышленноçа аталантармалли питех те кирлĕ май пулса тăраççĕ. Вĕсем урапа-çунасемпе ут тавраш ĕсене туса кăларма тата юсама, тăхăнмалли япаласем, сĕтел-пукансем туса кăларма, тир тума, ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлеме, кăмăк тума, тикĕт, урапа маçĕ туса кăларма пултараççĕ. Çак япаласемпе вырăнтах усă курмалла, çапла тусан çывăхри колхозсем, ĕçпе туртăм вăйĕ уйăрса тата чĕр товар тупса парса, промкомбината пулăшма пултараççĕ.

Анчах та çак кирлĕ ĕçе ăнăçлăн пурнăçласси районри организацисем тивĕçлипе пулăшмасăр пулма пултараймасть.

Район тата кооперади промышленноçĕн ĕçĕсене Вырăнти промышленность Халăх Комиссариачĕ те, Апат-çимĕç промышленность Халăх Комиссариачĕ те тата промысла кооперацине инвалидсен кооперади союзĕсем те çителĕкĕр ертсе пыраççĕ.

Вырăнти промышленность Халăх Комиссариачĕ ку таранччен хăйĕн предприятийĕсене начар ертсе пырать. Чылай районсенчи промкомбинатсем кивĕ майсемпе ĕçлеççĕ. Анчах Вырăнти промышленность Халăх Комиссариачĕ рабочисен ĕçне çăмăллатакан тата хăвăртлатакан техникăна çеç мар, ансат механизмсене те ĕçе кĕртме тăрăшмасть. Лайăх ĕçлекен комбинатсен опычĕпе вырăнти промышленность работникĕсене палăлтармаççĕ.

Вырăнти промышленность Халăх Комиссариачĕн работникĕсем пур çĕрте те пулкалама юратаççĕ, анчах ĕçри çитменлĕхсене сирме пулăшмаççĕ, ĕçе çиелтен тĕрĕслесе тухнипе кăна лăпланаççĕ.

РСФСР Совнаркомĕ пирĕн вырăнти промышленность предприятийĕсем начар пахалăхлă продукци туса кăларнине сирпĕнĕн асăрхаттарчĕ. Анчах та промкомбинатсен ĕç пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе мĕн те пулин туни куранмастьха.

Çавăн пек çитменлĕхсем промысла кооперацине инвалидсен кооперади работникĕсен ĕçĕнче те пур. Унсăр пуçне вĕсем промысла артелĕсен ĕçри ăнăçлăхне артель членĕнче тăмаççĕ, артель председателĕсем ыйтусене хăйсем тĕллĕн кăна татса параççĕ, артель правленийĕ е членсен пĕрлешӳллĕ пухăвĕ ирĕк парасса пăхмаççĕ. Артельсенчи ревизи комиссийĕсем правленипе унăн председателĕн ĕçĕсене темиçе çул хушши тĕрĕслемеççĕ.

Республикăри виçĕ районра райпромсоюзсем туни артельсен ĕçĕсене ертсе пыраççине чылай лайăхлатма пулăшмалла. РСФСР Совнаркомĕ çумĕнчи промкооперади управленийĕн пирĕн республикăри уполномоченнийĕн Степанов юлташăн, райпромсоюзсем тăвассине хăвăртрах вĕçлемелле, вĕсене кадрсем тупса памалла тата малтанхи вăхăтра ĕçе йĕркелесе яма пулăшмалла.

Пирĕн республика территорийĕнче союза пăхăнса тăракан предприятисем те сахал мар. Вĕсен коллективĕсем Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче мухтава тивĕçлĕ ĕçлерĕç. СССР Совнаркомĕн кăçалхи июнĕн 21-мĕшĕнче йышăннă постановленийĕ тăрăх, çав предприятисем сумĕнче ĕççыннисем валли куллен кирлĕ таварсем туса кăларакан цехсене тепĕр хут ĕçе ямалла е çĕнĕрен организацилемелле. Чăваш халăхĕ çав цехсенче тимĕр чашăктирĕксем, электротехника япалисем, пластмассăран тунă япаласем, сĕтел-пукансем тата ытти нумай япаласем туса кăларасса кĕтет.

Ĕççыннисем валли куллен кирлĕ таварсем туса кăлараç тĕлĕшпе Вăрман промышленность Халăх Комиссариачĕн, Вырăнти топливо промышленность Халăх Комиссариачĕн, вырăнти стройматериалсен управленийĕн, вăрмана сыхлакан управленин, Чăваштребсоюз тата Чăвашторг предприятийĕсен те ĕçлемелле. Вĕсен çак çулта пĕтĕмпе 10 миллион тенкĕлĕх товар туса кăлармалла. Анчах та çак план питĕ начар пурнăçа кĕрсе пырать. Сăмахран, Вăрман промышленность Халăх Комиссариачĕ çулталăкри плана 6 уйăх хушшинче 21 процент кăна, вырăнти топливо промышленность управленийĕ 27 процент кăна тултарнă, сутуилӳ организацисем вара хăйсен мастерскойĕсене организацилеме те тытăнман.

Чăваш республикинче вырăнти чĕртавартан ĕççыннисем валли куллен кирлĕ япаласемпе апат-çимĕç продукчĕсем туса кăлармалли майсем çителĕклĕ. Çав майсемпе пĕлсе усă курса, куллен кирлĕ таварсене ĕççыннисем ыйтнă чухлĕ туса кăларасси, парти райкомĕсен, предприятисенчи парторганизацисен, вырăнти совет органĕсен тата хуçалăх руководителĕсен кулленхи ĕçĕ пулса тăрать.

ÇĔНĔ ВĔРЕНӲ ÇУЛĔ УМĔН

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланасси ĕрне кăна юлчĕ. Анчах çапах та районри хашпĕр шкулсем вĕренӳ çулне хатĕрленес ĕçе çаплах тăсса пыраççĕ.

Элĕкри вăтам шкул—районри пĕртенпĕр ăвăтам шкул. Çапла вара вăл районри ытти шкулсене пример кăтартса пыма тивĕçлĕ. Чăннипе илсен, ку шкул ытти шкулсенчен юлса пырать.

Шкул паянхи куна çитсе те вĕренӳ çулне пуçлама хатĕр мар. Пурĕ 66 куç кантăк партмалла пулсан, ку тараччен пĕр куçне те партман. Классене юсама тата шуратма халь кăна тытăннă. Кăмакасене те пĕтĕмĕшпе пекех çĕнĕрен тумалла, çапла пулин те ку ĕçсене тума темиçе кун каярах кăна тытăннă.

Хĕл валли вутă турттарас тĕлĕшпе те шкул юлса пырать. План тăрăх шкулăн 450 кубометр вутă турттарса хатĕрлемелле пулсан, пурĕ те 360 кубометр хатĕрлесе 15 кубометр кăна турттарнă.

Ачасене валли вĕренӳре кирлĕ хатĕрсене тупса хуман. Шкул директорĕ Алексеева юлташ вĕренӳ çулне хатĕрленес вăхăта канцелярринче ларсах ирттерет.

— Сентябрĕн 1-мĕшĕччен хатĕрленсе çитĕпĕр-ха,—тет вăл час-часах.

Вутă хатĕрлес ĕç Юманлăхри çичĕ çул вĕренмелли шкулта та тивĕçлипе пулса пымасть. Шкулăн пурĕ 160 кубометр вутă турттармалла пулсан, паянхи куна пĕр кубометр та турттарман. Çав вăхăтрах шкул директорĕ Ефимов юлташ шкул валли вутă турттарма илнĕ лашасемне хăй килнĕ вутă турттарма тытăннă.

Шураçри пуçламăш шкулăн картишĕнче вутă пурĕ те 3 кубометр кăна. Çапах та шкул заведующийĕ Михайлова ку тĕлĕшпе нимĕн те тумасть. Шкул участокĕнче пĕр гектар ыраш вырмалла. Ăна та хăçан вырма тытăнасси палăлмар.

Ф. КАЧЕЕВ.

Красноармеецсен музыка кружокĕ

Пирĕн чăсри красноармеецсем, хăйсен кану вăхăтне культурăллă та савăнăçлă ирттерес тесе, нумаях пулмасть музыка кружокĕ организацилерĕç. Кружокра чăваш ачисем те сахал мар. Кружок темиçе тĕрлĕ музыка инструменчĕсем илсе хатĕрленĕ. Июлĕн 10-мĕшĕнче кружок красноармеецсене малтанхи хут хăйĕн пултарулăхне кăтартса пачĕ. Уйрăмăнах куракансене «Огенек» юрă питĕ килĕшрĕ. Çавăн пекех Иванюк красноармеец вырăсла ташша, Солидаров красноармеец «Цыганка» ташша пысăк пултарулăхпа ташласа пачĕç.

Красноармеец Г. ЛЕВИН.

Колхозри водопровод

Куславкка районĕнчи Аманикри Хĕрлĕ Ялавлă «Динамо» колхоз членĕсем 1200 метр тăршшĕ водопровод тунă.

Унăн тăршшĕ мĕнпурĕ 2.000 метр пулмалла, 15 сĕртен шыв илмелле пулать. Выльăх-чĕрлĕх суттиĕрĕсенче ятлараса тунă шыв пăркисем ĕçлеме пуçлаççĕ.

Водопроводăн чертежне тума тата ăна ĕçе яма колхоза Куславкка комбинатĕнчи инженерсем нумай пулăшнă.

Хаçатра пичетленсе тухман материалсем тăрăх

„Колхоз пурлăхне тустараççĕ“

Пирĕн редакцине Элĕк районĕнчи Хитекушкăн ялĕнчи «Новый путь» колхоз членĕсем колхоз кладовщикĕ С. Л. Лукин итемрен тырă кĕртнĕ чухне тĕрĕс мар виççе кĕртни çинчен, çавна май 34,4 центнер ытлашши тухни çинчен çырса пĕлтернĕччĕ. Çак ĕçе колхоз счетоводĕ И. Т. Скворцов пĕлсе пытарса хăварма шутланă пулнă.

Çак çырăва эпир Элĕк районĕнчи прокурор патне тĕрĕслеме ятăмăр. Элĕк районĕнчи прокурор Иванов юлташ пирĕн пĕлтернĕ тăрăх, çырура кăтартнисем пурте тĕрĕс пулнă. «Новый путь» колхозăн кладовщикне С. Лукина тата колхоз счетоводне И. Скворцова уголовнăй йĕркене айăплама суда параççĕ.

СУД

Посылкăсене çаратакансем

Анна Якуновăпа Мария Пăдиарова Чкаловски районĕнчи почта уйрăмĕнчен Шăмăршăри почта уйрăмĕ валли посылкăсем, çырусем, хаçатсем тата ытти япаласем илсе çул çине тухнă. Почта лавĕ çинче фронтовиксен посылкисемпе çырăвĕсем те нумай пулнă. Çул çинче Якушовăпа Пăдиарова 4 посылка тата темĕн чухлĕ çыру уçнă та, унти япаласене каларса илнĕ.

Айăпланакан Анна Якушова хăйĕн килне пурçăн халат, хĕрарăм кĕпи, сĕтел çитти, 228 листа таса хут, минтер пичĕ тата ытти япаласем те илсе кайнă. 35 çыру ватса 120 фотоӳкерчĕк кăларса илнĕ. Кунсăр пуçне, вăл фронтовиксем патне арăмĕсем çинчен тăтăшах элеклĕ çырусем ярса тăнă.

Çавăн пекех айăпланакан Мария Пăдиарова та хăйĕн килне тĕрлĕ япаласем илсе пынă. Çырусем ăшĕнчи фотоӳкерчĕксене кăларса илнĕ.

Айăпланакан Пăдиарова хăйĕн киревсĕр ĕçĕсене пытарса хăварас шутпа, судра туннă, анчах свидетельсем унăн ĕçĕсене тĕрĕс кăтартса панă.

Шăмăршă районĕнчи халăх сучĕ Якушовăпа Пăдиарова, çавăн пек киревсĕр ĕçсем тунăшăн, РСФСР Уголовнăй Кодексĕн 109-мĕшпе 116-мĕш статьисемпе айăпласа иккĕшне те 10-шар çул хушши тĕрмере хупса усрамалла тунă.

ТАСС пĕлтерни

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Великобритани тата Франци правительствисем хăйсен представителĕсене Грецие унти халăх суйлавне контроллеме яма йышăннă май, ТАСС çапла пĕлтерме полномочи илнĕ: Совет Союзĕн ертсе пыракан çыннисем çак тĕлĕшпе çакăн пек позици йышăнаççĕ.

Пĕр-пĕр çĕршывсенчи государствăсем контроллес ĕлăлана Совет Правительстви ырламасть, мĕншĕн тесен çавăн пек туни вăл демократизм принципĕсене пăсать тата вăл çав çĕршывăн хăйĕн законĕсемпе пурăнас правине катать. Çавна шута илсе, Совет Союзне Грецири халăх суйлавне контроллес ĕçе хутшăнма сĕннине Совет Правительстви сирсе янă.

Япони парăнни çинчен калакан акта алă пусас умĕн

ЛОНДОН, августăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Япони парăнни çинчен калакан акта союзлă державăсен ячĕпе алă пусма уйăрнă Макартур генерал çапла пĕлтернĕ: çав акта алă пуснă чухне çаксем пулаççĕ: США-ран Ниминц адмирал, Пĕрлешӳллĕ Колевствăран—Фрэзер адмирал, Австралирен—Блэми генерал, Голланди Индийĕнчен—Ван Ойен генерал, Совет Союзĕнчен — Деревянко генерал, Китайран—Су Юн-чан генерал, Францирен—Леклерк. Канадăпа Çĕнĕ Зеланди представителĕсем кам пуласси палла мар-ха.

МАКАРТУР ГЕНЕРАЛ КАЛАСА ПАНИ

НЬЮ-ЙОРК, августăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин Манила хулинчи корреспонденчĕ Макартур генерал Манила хулинчи конференци çинчен каласа панине пĕлтерет. Макартур генерал çапла калана:

«Япони представителĕсем эпир ыйтнă даннăйсене пурне те пачĕç. Вĕсем Токиона Пĕрлешнĕ нацисенчен Япони правительствипе император ставкине пĕлтермелли кăтартусем илсе кайрĕç.

Союзлă державăсем лартнă Верховный Командующийĕ пулса эпĕ часах Японие каятăп. Манпа пĕрле унта типсĕр, тинĕс тата сывлăш-çар вăйĕсем те пыраççĕ. Кайма лайăх çанталăк тăрсан, парăнни çинчен калакан условисене çак вунă кун хушшинче алă пусмалла. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Китай республики, Пĕрлешӳллĕ Королевство тата Совет Союзĕ ячĕпе Японин хĕпăлалла вăйĕсем пĕтĕмĕшпе парăннине йышăннă хыççăн, эпĕ Японие вăрçакан Пĕрлешнĕ нацисен интересĕсене сыхласа, Японин император ставкине çапла хушăп: çав ставка Япони командующийĕсене, вĕсем ирек ăçта тăраççĕ пулсан та, пĕр сăмахсăр парăнма приказсем памалла, çавăн пекех тата çав командующисем контроллесе тăракан мĕнпур çарсене те союзниксен тивĕçлĕ командующийĕсене парăнмашкăн хушмалла. Лăпкă океанăн Филиппин утравĕсенчен кăнтăрахра выртакан кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи районта Англипе Австрали командующийĕсем ĕçе хăйсем аллипе илсе ответлă пулса тăраççĕ.

Эпĕ çакна хытă шанса тăратăп: Япони парăнни çинчен формăлăнăй йĕркене алă пусассине кĕтсе тăнă вăхăтра пур фронтсенче те шăплăх тăрĕ, Япони парăннине тек юн тăкмасăрах пурнăçа кĕртме пулĕ».

СИНГАПУРТА ЯПОНИ ÇАРĔСЕМ ПАРĂНАССИ

ЛОНДОН, августăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Сингапурти радиостанци (ăна японепсем контроллесе тăраççĕ) çапла пĕлтернĕ: августăн 22-мĕшĕнче Япони генерал-майорĕ Хирахито Канин принц, Япони императорăн представителĕ пулса, Сингапура пынă. Унта вăл японепсен командующине вăрçма чарăнма хушакан приказ илсе пынă.

АМЕРИКА ХĔÇПĂШАЛЛĂ ВАЙĔСЕН ВĂРÇĂРИ ÇУХАТĂВĔСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, августăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ панă хыпарсем тăрăх, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен çар министерстви çапла пĕлтернĕ: Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен кăçалхи августăн 14-мĕшĕччен вăрçăра 922.757 çын пĕтнĕ. Вĕсенчен — 199.183 çын вилнĕ, 570.997 çын аманнă, 33.653 çын пĕр хыпарсăр çухалнă, 118.924 çын тыткăна лекнĕ.

США-н БАЛКАНРИ ПОЛИТИКИ ÇИНЧЕН АМЕРИКĂРА МĔН ÇЫРАССĔ

НЬЮ-ЙОРК, августăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). «Чикаго Дан» хаçатăн Вашингтонри корреспонденчĕ Рейнольдс çав хаçатăн августăн 19-мĕшĕнче тухнă номерĕнче çапла çырать: Грецири суйлавсене сăнаса тăрасси «Америка Балканри политикăна нихăçанхинчен те ытларах хутшăнмашкăн» тĕслĕхĕ пулса тăрать. Рейнольдс çапла пĕлтерет: США суйлав участокĕсене сăнаса тăма Грецие 1.500 çын яма шутлать, тет.

ОБЩИНАСЕН ПАЛАТИНЧЕ ГРЕЦИРИ ЛАРУ-ТĂРУ ÇИНЧЕН ЫЙТНИ

ЛОНДОН, августăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ют çĕршыв ĕçĕсен министрне Бевина общинăсен палатинче Греци пирки темиçе ыйту панă.

Лейборист Сеймур Кокс çапла ыйтнă: августăн 12-мĕшĕнче Грецири либералсен партийĕн лидерĕ çапла пĕлтернĕ: суйлав списокĕсене мĕнле майпа хатĕрленине шута илсе пирĕн парти суйлава хутшăнмасть, терĕ. Çакна Бевин пĕлет-и?—тесе ыйтнă Кокс. Суйлав списокĕсене уллавлă майпа хатĕрленĕ пирки, çав суйлава сăнаннинчен мĕн усă пур?—тесе хушса хунă Кокс.

Бевин çапла ответленĕ: суйлав списокĕсене уллавлăн уллăштарса хатĕрленĕ теннипе эпĕ килĕшместĕп, тенĕ. «Çак тĕлĕшпе çынсене иккĕлентерни вырăнлă мар тесе шутлатăп эпĕ,—тенĕ Бевин.—Политикăллă партисен лидерĕсем нумай сăмах тухса калани те манăн шухăша уллăтарас çук». Кокс тата çапла ыйтнă: Ялтăри конференци йышăннă тăрăх, ирĕке кăларнă çĕршывсенче пуринче те тĕрлĕ представительсенчен тунă вăхăтлăх правительствăсем пулмалла, вĕсенче демократиллĕ мĕнпур партисен представителĕсем пулмалла: çак решени Грецие тивĕçли-и? —тенĕ. Бевин çапла ответленĕ: «Регент тата Грецири политикăллă партисен лидерĕсем юлашки вăхăтра пĕр-пĕринне калаçни çакна кăтартса панĕ: мĕнпур партисен представителĕсенчен правительство тума унта май çук, мĕншĕн тесен Грецири политикăллă тĕп партисем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлес çук. Кунсăр пуçне, хальхи вăхăтра правительствăна пăртак та пулин уллăтарни те ĕçе нумай пăснă пулĕччĕ, мĕншĕн тесен суйлавпа плебисцита хатĕрленес ĕç вăраха кайнă пулĕччĕ. Правительствăна уллăтарни тата хальхи правительство экономикăпа финанс тĕлĕшпе тăвакан ĕçсене чарса лартнă пулĕччĕ. Грецие малашне çирĕп те лайăх пурăнасси çав ĕçсене пурнăçланинчен килет».

Кокс «Грецире Болгарире хăратнинчен те нумай хытăрах хăратни çинчен калакан хыпарсене» аса илсен (Болгари тĕлĕшпе ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви ытла та «сисемлĕ», тенĕ Кокс), Бевин çапла калана: эпĕ çапла каланипе килĕшместĕп, тенĕ.

ВЕНГРИРЕ ВĂХĂТЛĂХ ХАЛĂХ ПУХĂВНЕ ПУХĂССИ ÇИНЧЕН

ВАШИНГТОН, августăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем çапла пĕлтереççĕ: Венгрин вăхăтлăх халăх пухăвĕн председателĕ Жедени Бела калана тăрăх, Венгрин вăхăтлăх халăх пухăвне сентябрĕн 5-мĕшĕнче пухаççĕ.

А. А. ЖДАНОВ ГЕНЕРАЛ-ПОЛЯКОВНИК ХЕЛЬСИНКИ ХУЛИНЕ ПЫНИ

ХЕЛЬСИНКИ, августăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен контроль комиссийĕн председателĕ А. А. Жданов генерал-полковник августăн 21-мĕшĕнче Москавран Хельсинки хулине пынă.

ДЕ ГОЛЛЬ ВАШИНГТОНА ÇИТНĔ

ВАШИНГТОН, августăн 23-мĕшĕ (ТАСС). Ĕнер де Голль самолетпа Вашингтона вĕçсе çитнĕ. Аэродромра ăна государство секретарĕ Бирнс тата США правительствин ытти представителĕсем хирĕç тухса кĕтсе илнĕ. Аэродромран де Голль Шурă Çурта кайнă. Унта вăл Трумэн президентпа тĕл пулнă.

МИЛАН ГРОЛ ВЫРĂНТАН ТУХНА

БЕЛГРАД, августăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Югослави премьер-министрĕн заместителĕ Милан Грол вырăнтан тухнă.

Ответлă редактор заместителĕ Н. С. СТЕПАНОВ.

УЛЬЯНОВСКРИ ГОСУДАРСТВĂН ЯЛХУÇАЛĂХ ИНСТИТУЧĔ

агрономи, ветеринари тата зоотехник факультетĕсен 1-мĕш курсне, çавăн пекех тата çав факультетсен вăтăм курсĕсене вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Агрономипе зоотехника факультетĕсенче 4 çул, ветеринари факультетĕнче 5 çул вĕренмелле.

Институт совхозсенче, лаша дворĕсенче, грестсенче, наукăпа тĕпчев институчĕсенче, опытлă станцисенче, лабораторисенче тата ветеринарин, зоотехникăн, агрономин ытти учрежденийĕсенче ĕçлеме пысăк квалификациллĕ зоотехниксем, агрономсем тата ветеринари врачĕсем вĕрентсе хатĕрлет.

Вăтам шкултан 1944 çулта отлично вĕренсе тухнисене тата 1945 çулта ситĕнсе çитнине пĕлтерекен аттестат илме экзамен парса ылтăн е кĕмĕл медаль илнисене института экзаменсăрах илеççĕ. Вĕренме кĕрес текен ытти çынсене физикăпа, химипе, вырăс чĕлхипе тата литературăпа экзамен тыттараççĕ.

Вĕренме кĕресси çинчен заявленип